43-61

# Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çыру

№ 3447

Чувашская
книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1943

## Пирĕн мухтавлă ывăлăмăрсем!

Хĕрлĕ Çарăн хастар воинĕсем, Улăп-паттăрăн тивĕçлĕ йăхĕсем, халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ Атăл пăлхавçисен вĕри юнлă ăрăвĕсем, ылханлă тăшмана хирĕç кĕреш-юмансем пек çирĕп тăрса пире хӳтĕлекен паттăрсем,—

Сире чăваш халăхĕ пĕтĕм чĕререн хĕрӳллĕ салам ярать!

Пирĕн таса Тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăннă нимĕç тискер кайăкĕсене пуçĕпех çапса аркатма, совет çĕрĕн аслă талккишĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех тасатса çитерме сире, пирĕн паттăр ывăлăмăрсем, ырă сывлăх сунатпăр. Хамăрăн тăван çĕр, сирĕн чĕресене хăйĕн хăватлă сĕткенне парса, иксĕлми вăй кĕрттĕр! Сире çапăçу хирĕнче паттăр та чаплă ĕçсем тума пехиллетпĕр! Пирĕн асаттесен хĕçĕ нихăçан та тутăхман, эпир нихăçан та тăшмана пăхăнман. Хăюллă та хастар пулăр, пирĕн паттăрсем!

Сире аслă Атăл хăйĕн хумĕсем çинче чăпăл туса çитĕнтернĕ. Тăван совет çĕршывĕ Сире хаяр ăмăрткайăк пек вĕçме сарлака та хăватлă çунатсем панă, ирсĕр тăшмана таптама—танксем, фашистла тискер кайăксене вĕлерсе пĕ-

терме—шанчăклă хĕçпăшал панă. Пуринчен пахараххи—çапăçура нимĕнрен хăрама пĕлмен чĕресем панă. Çапăçу хирĕнче арăслан пек пулăр! Чыслă тытăр асаттесемпе аттесен ятне, чĕрере усрăр халăх тивĕçне!

Чăваш çĕршывĕ мĕн авалтанпах пирĕн аслă Российăн вăтаçĕрĕнче тăрать.

Эпир Российăна яланах хамăрăн тăван çĕршыв тесе шутланă. Аслă вырăс халăхĕ хӳтĕлемен пулсан, пирĕн пек сахал йышлă халăхсене ют çĕртен килнĕ тăшмансем тахçанах туртса çурса, çисе яма пултарнă. Çавăнпа Россия çĕршывĕ умне килсе тухнă хăрушлăх яланах пирĕншĕн те хăрушлăх пулнă. Çавăнпа вырăс çĕрĕ çине тăшман тапăнсан, вырăс халăхĕпе пĕрле пирĕн чăваш халăхĕ те пĕрлехи тăшмана хирĕç яланах кĕрешĕве çĕкленнĕ.

Вунçиччĕмĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнче Мускава ютçĕршыв çарĕсем тапăнса кĕрсен, пирĕн халăх Кузьма Минин чĕннипе Чулхула ополчениене хутшăннă, çар валли тир-сăран, çăм, пир-авăр, тырпул, аш-какай парса тăнă. Çак пархатарлă ĕçсем историн аслă кĕнеки çине яланлăхах ылттăн саспаллисемпе çырăнса юлнă.

Аслă Петĕр патша саманинче чăвашсем, ытти халăхсемпе пĕрлех, Питĕр хулин—хальхи Ленин хулин никĕсне хывнă çĕрте тар юхтарса ĕçленĕ. Йывăр та пулнă пулĕ, анчах çав крепость пирĕн тăван çĕршывăн ĕмĕрлĕхех чи çирĕп те чи кирлĕ крепоçĕ пулса юлчĕ. Питĕр хулин никĕсне хывакансен ывăлĕсен ывăлĕсем

паян Ленин хулине фашистла вăрă-хурахсенчен хастаррăн хӳтĕлессĕ.

Пирĕн çĕршывăн летопине чăваш халăхĕ 1812—1814 çулсенчи отечественнăй вăрçа хутшăнни тивĕçлĕ кĕрсе юлнă. Чăвашсем çар валли укçа-тенкĕ тата апат-çимĕç пухнă, хăйсен ывăлĕсене Наполеона хирĕç вăрçа ăсатнă. Чăваш воинĕсем —Чикме уесĕнчи Урпаш околодокне кĕрекен Тяпти ялĕнчи унтер-офицер Василий Григорьев, Етĕрне уесĕнчи Кушар околодокне кĕрекен Кĕçĕн Юнтапа ялĕнчи унтер-офицер Сидор Семенов тата ыттисем те çав халăх вăрçинче хăйсен паттăрлăхĕпе палăрса юлнă.

1914—1918 çулсенчи тĕнче вăрçинче чăваш ывăлĕсем, ытти халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, вырăс халăхĕ ертсе пынипе, нимĕçсене хирĕç вăрçнă. Брусилов хăйĕн çарĕпе тăшманăн обöронине татса кĕнĕ чухне чăвашсем арăслансем пек çапăçнă. Чăваш салтакĕсем командирсен приказĕсене яланах тӳрĕ кăмăлпа, вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртнипе палăрса тăнă.

Чăваш халăхĕ тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте хăйĕн паттăрлăхĕпе хастарлăхне иртнĕ вăрăм кунçулта сахал мар кăтартса панă. Темĕнле йывăр килсен те, темĕнле хĕнхур тӳссен те вăл хăйĕн сăн-сăпатне, хăйĕн шанчăкне, хăйĕн паттăрлăхне, хăйĕн чĕлхине, сăвви-юррисене çухатман. Вăл хăйĕн тивлечĕпе тивĕçлĕхне ĕмĕрсем витĕр паянхи çутă саманана илсе çитернĕ.

Этемме этем пусмăрланине хирĕç, патша тытăмĕпе тиранине хирĕç, харам-пырсене хирĕç, хăйĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн пирĕн халăх асран кайми 1917 çулта вырăс халăхĕпе пĕрле пĕр çын пек пулса кĕрешĕве çĕкленнĕ. Пихтемейпе Аттенейăн—Степан Разинпа Емельян Пугачевăн мухтавлă дружинникĕсен тивĕçлĕ йăхĕсем, вырăс рабочийĕсем ертсе пынипе, 1917 çулти Октябрьте патшан Хĕллехи дворецне штурмланă, граждан вăрçин уй-хирĕсенче ютçĕршыв интервенчĕсене хирĕç, шурă çарсене хирĕç паттăррăн çапăçнă. Чăваш çĕрĕ çинче, Шупашкар сывăхĕнчи Будайка ялĕнче çуралнă, Шупашкартан империализм вăрçине кайнă Василий Иванович Чапаев пирĕн аслă çĕршывăн аслă историне граждан вăрçин чаплă геройĕ, хастар та ăслă полководец пулса кĕрсе юлчĕ. Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, Чапаевăн çулăмлă ячĕ чăваш боецĕсене хаяр çапăçура хавхалантарса, вăй парса пырать. Пĕр чаçри чăваш боецĕсем чăваш халăхĕ патне янă çырура: „Эпир тăшмана хирĕç хамăрăн паттăр земляк пек—Чапаев пек çапăçăпăр“, тесе çырчĕç. Граждан вăрçинче çуралнă геройсен—чăваш ывăлĕсен ячĕсем паянхи юрăсемпе сăвăсенче янăраççĕ, вĕсем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене халăх ĕçĕшĕн паттăррăн та хастаррăн, хăюллăн кĕрешме чĕнеççĕ.

Эсир те, пирĕн тăван ывăлăмăрсем, аслă асаттесен авалхи чапне çĕре ан ӳкерĕр! Çапăçура

дисциплинăллă та ăслă, хастар та паттăр пулăр!

Тăван çĕршывшăн, çутă та телейлĕ пурнăçшăн, этем тивĕçлĕхĕпе тивлечĕшĕн халăх нумай юн тăкса кĕрешни ахаль çухалмарĕ. Халăхăн çав вĕри юнĕпе нумай ĕмĕрсем хушши шăварăннă аслă çĕршывра социализмăн чечеклĕ сачĕ ўссе çитĕнчĕ. Октябрьти социализмлă революципе çуралнă чăваш халăхĕ те çирĕп ура çине тăчĕ.

Большевиксен партийĕ, аслă çулпуçсем Ленинпа Сталин ертсе пынипе, вырăс халăхĕ тăванла пулăшса тăнипе, пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн советлă социализмлă государствине туса çитĕнтерчĕ.

Сталинла аслă пятилеткăсем тăван республикăн сăн-сăпатне пĕтĕмпех çĕнетрĕç. Çил шăхăрса çўренĕ пушхирсенче халĕ çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем ўссе ларчĕç. Колхозсем ĕçлесе çĕнетнĕ тăван çĕр пуян тырпул пама тытăнчĕ. Тутăхса кайнă чалăш сухапуç вырăнĕнче хăватлă тракторсем ĕçлеççĕ. Ĕлĕкхи тĕттĕм самана витĕр хĕвел çути ўкмен чăваш ялĕнче халĕ шкулсемпе клубсем, культурăн çĕнĕ вучахĕсем, больницăсем çитĕнчĕç. Патша саманинчен юлнă инкек—трахома пуçĕпех пĕтсе пырать, партипе правительство пулăшнипе пиншер чăваш ĕççыннисем трахомран сывалчĕç, çĕнĕ кун çутине курчĕç.

Совет влаçĕн çулĕсенче чăваш халăхĕн хăйĕн рабочи класĕ ўссе çитĕнчĕ. Ĕлĕк чăпта станокĕнчен ытла нимĕнех те курман чăваш ĕççыннисем, чăваш хĕр-упраçĕсем халĕ пысăк фабри-

кăсемпе заводсенче кăткăс станоксемпе ĕçлеме тытăнчĕç. Ĕлĕк-авал тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕх тыткăнĕнче пулнă чăваш хĕрарăмĕсем, Совет влаçĕ панă аслă правăсемпе усă курса, государствăна тытса пырас ĕçе хутшăнчĕç.

Чăваш халăхĕн хăйĕн аслă шкулĕсем, хăйĕн театрĕсем, хăйĕн литературипе искусстви, музыки, живопиçĕ пур. Унăн хăйĕн инженерĕсемпе техникĕсем, ученăйĕсемпе врачĕсем, учителĕсемпе агрономĕсем, писателĕсем, композиторĕсем, артисчĕсемпе художникĕсем—хăйĕн интеллигенцийĕ пур.

Чăвашсен тĕп хули—Шупашкар—ĕлĕкхи купцасен хулинчен, мунчалапа чăпта склачĕсен хулинчен совет влаçĕн çулĕсенче республикăн политикăпа администраци, промышленноçпа культура центрĕ пулса тăчĕ.

Кăçал 23 çул тултаракан пирĕн автономлă республикăн кăкăрĕ çинче Ленин орденĕ çуталса тăрать. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче те пирĕн республика Ленин орденĕн чысне çӳлте тытса тăрать.

Чăваш халăхĕн фронтри паттăр ывăлĕсемпе хĕрĕсем! Сирĕн çак вăрçăра ылханлă тăшманран хӳтĕлемелли нумай. Çĕршывăн çав пуянлăхĕсене халăх хăйĕн вăйĕпе тунă. Кашни пусăм çĕре халăх юн тăкса çĕнтерсе илнĕ, тар юхтарса çемçетнĕ. Кашни çуртăн, кашни завод корпусĕн кашни кирпĕчне пирĕн ăста алăпа туса хывнă. Пирĕншĕн кашни сад-пахчинчи

кашни чӗрӗ турат, хула урамӗсенчи кашни чул чун пек хаклӑ та чӗре пек ҫывӑх.

«Тӑван ҫӗршыв сывӑ пулсан, тӑван йӑву пулӗ сан»,—тет пирӗн халӑх. Ҫак сӑмахсене пурнӑҫ ҫуратнӑ. Тӑван ҫӗршывшӑн хӑрушӑ кунсем килсе ҫитсен, ӗмӗрхи традицисене тытса пырса, пирӗн халӑх вырӑс халӑхӗпе пӗрле яланах тӑшмана хирӗҫ ҫӗкленнӗ. Вырӑс халӑхӗпе чӑваш халӑхӗн туслӑхӗ юнпа ҫыхӑнса ҫирӗпленнӗ. Вӑл туслӑха нихӑҫан та, нимӗнле тӑшман та ҫӗмӗрес ҫук!

Халӗ те, юнӗҫен нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ вилӗмле кӗрешӳ пынӑ кунсенче, пирӗн ҫулпуҫӑмӑр, пирӗн юратнӑ аслӑ аттемӗр Сталин юлташ чӗннипе, пирӗн халӑхӑн чи лайӑх ывӑлӗсем, пӗр ҫын пек пулса, хамӑрӑн пурнӑҫа, хамӑрӑн пуянлӑхсене, хамӑрӑн чыслӑхпа никама пӑхӑнманлӑха хӳтӗлеме ҫӗкленчӗҫ.

Хамӑр ывӑлсене вӑрҫӑ хирне, хамӑр ҫӗрӗн таса чиккисене сыхлама ӑсатнӑ чухнӗ эпир: чӑваш вӑрманӗсенчи юман-кӗрешсем пек ҫирӗп пулӑр!—тесе пехиллетпӗр.

Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсемпе хӗрӗсем хамӑр халӑхӑн ячӗпе чыслӑхне, историллӗ традицийӗсене ҫӳлте тытаҫҫӗ. „Пуҫна ҫухатсан та чысна ан ҫухат!“, тесе, вӗсем аслӑ вырӑс халӑхӗн тата пирӗн тӑван ҫӗршыври ытти халӑхсен ывӑлӗсемпе пӗрле алла-аллӑн тӑрса, нимӗҫ вӑрӑхурахӗсене хирӗҫ ҫапӑҫӑва кӗреҫҫӗ.

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче паттӑрлӑхпа хӑюллӑх кӑтартнӑшӑн

Совет Правительстви чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсене 1900 çынна ытла Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем парса наградăланă. Паттăррисенчен те паттăррисем Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

„Эпĕ вилĕмрен хăрамастăп, вилĕм манран хăрать", тет Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов. Вăл юмахри ăмăрткайăк пек тăшманăн пуçĕ çине çиçĕмле тăрăнать. Вăл—ĕмĕрлĕхе асра юлнă Гастелло геройăн ученикĕ. Капитан Орлов пĕтĕмпе 144 хутчен çĕрлехи боевой вĕçевре пулнă. Хăйĕн экипажĕпе пĕрле Орлов юлташ тăшманăн 93 самолетне, 60 ытла танкне, горючи цистернисем, танксемпе боеприпассем турттарса пыракан вуншар эшалона пĕтерсе тăкнă. Пĕр пин ытла гитлеровеца леш тĕнчене ăсатнă.

Хăюллă капитан Орлов
Сĕм-тĕттĕмре вĕçет,
Мĕлки ун шелсĕр çиçĕм пек
Çĕр тăрăх вирхĕнет,—

тесе çырать чăваш халăхĕн ывăлĕ çинчен вырăс поэчĕ.

„Ан тĕлĕнтер чĕлхӳпе, ĕнентер ĕçӳпе", — тет пирĕн халăх. Гварди капитанĕ Мирон Ефимович Ефимов нимĕççенне 17 самолет, 19 танк, 500 автомашина, фашистсен 3.000 ытла салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтерсе тăкнă. Геройăн кăкăрĕ çинче Ылттăн Çăлтăр медалĕпе вишĕ орден ялкăшса тăраççĕ.

Подполковник Борис Михайлович Васильев, хăюллă та паттăр вĕçевçĕ истребитель, çапăçури юлташĕсене хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр хастарлăхĕпе тăшмана хирĕç кĕрешме хавхалантарса пырать. Вăл службăра тăракан часть пĕтĕмпе 375 хутчен çапăçура пулнă. Вăл хăй тăшман аэродромĕ çине пĕрре тапăнсах нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă. Вăл Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ, отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах тăшмана хирĕç çапăçать.

„Артиллери — вăрçă турри", тенĕ пирĕн аслă полководец Сталин юлташ. Çак сăмахсене Совет Союзĕн Геройĕ майор Павел Васильевич Лаптев хăйĕн кулленхи паттăрла ĕçĕнче тӳрре кăларать. Лаптев юлташ хăйĕн дивизионĕпе тăшманăн оборонине татса кĕнĕ çĕре хутшăнса, вăл 1.500 ытла нимĕçе, тăшманăн 13 туппине, 33 минометне, 90 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 5 склада çунтарса янă. Вырăс артиллерисчĕсен авалхи традицийĕсене çирĕп тытса пыракан чăваш халăх ывăлĕн кăкăрне виçĕ орден тата Ылттăн Çăлтăр медалĕ илемлетсе тăраççĕ.

Чăваш республикинчи Комсомольски районри Тукай ялĕнче çуралса ӳснĕ пирĕн землякăн — тутар халăх ывăлĕн Геннадий Габайдулин минометчикăн паттăр ĕçĕсем çинчен пĕтĕм Совет Союзĕ пĕлет. Вăл геройпа пирĕн чăваш халăхĕ тутар халăхĕпе пĕрлех мухтанать. Çав

паттӑрла ӗҫсем тӗрлӗ халӑхсен Хӗрлӗ Ҫарти туслӑхне палӑртса тӑраҫҫӗ.

Сире, хаклӑ ывӑлӑмӑрсем, ҫав туслӑха куллен кун татах та ытларах ҫирӗплетсе пыма ырӑ сунатпӑр.

Тӑван ҫӗршывшӑн Хасан кӳлли патӗнче ҫапӑҫса Совет Союз Геройӗн ятне илнӗ пирӗн земляк — подполковник Вячеслав Петрович Винокуров, белофинсене хирӗҫ вӑрҫнӑ чухнехи сурансем тӳрленсе ҫитменнине пӑхмасӑрах, нимӗҫ оккупанчӗсемпе вӑрҫма тухса кайрӗ. Вӑл совет танкӗсен хӑватлӑ колоннин пуҫне тӑрса, вӗсене фашистсен кӗтӗвӗсене хирӗҫ ҫапӑҫава ертсе кайрӗ.

Чӑваш ывӑлӗ ҫирӗм икӗ ҫулхи старши лейтенант Иван Смирнов аслӑ Ленин хулишӗн чӑннипех те арӑслан пек ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫ танкӗсен темиҫе атакине сирсе янӑ хыҫҫӑн пулемет расчочӗсем стройран тухсан, вӑл, вилӗмрен хӑрамасӑр ҫапӑҫса, фашистсен хӗссе пыракан автоматчикӗсене хирӗҫ нумай вӑхӑт хушши пӗччен кӗрешнӗ. Вӑл, тӗлӗнмелле паттӑр, хӑйӗн вӗри чӗри тапма пӑрахичченех тӑван ҫӗре хӳтӗленӗ. Вӑл тӑшман танкӗн урапи айӗнче пӗтнӗ, анчах тӑван ҫӗр ҫинчен пӗр утӑм та каялла чакман. Ленинград фронтӗнчи боецсем чӑваш паттӑрӗ ҫинчен юрӑ хывнӑ:

Ҫӗршывӑмӑр, эсӗ анне пек ӳстертӗн
Герой-паттӑрсенӗн ретне.

Манмастпӑр эпир нихӑҫан, ӗмӗрне те
Смирнов пулеметчик ятне.

Ҫак юрӑ совет боецӗсене паттӑрла ҫӗнӗ ӗҫсем тума хавхалантарать.

Чӑваш халӑх ывӑлӗн — чаплӑ снайпер Родион Давыдовӑн ҫивӗч куҫӗ пӗр фашиста та вӗҫертмест. 165 кун хушшинче вӑл снайпер винтовкинчен персе 355 нимӗҫе вӗлернӗ. Нимӗҫсем пӗр участокра наступлени тунӑ чухне вӑл 3 кун хушшинче кӑна 105 гитлеровеца леш тӗнчене ӑсатнӑ.

Пирӗн халӑхӑн паттӑр ывӑлӗсемпе пӗрле фронтра тӑшмана хирӗҫ чӑваш хӗрӗсем те хӑйсен пурнӑҫӗсене хӗрхенмесӗр кӗрешеҫҫӗ. Вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех хӑйӗн ирӗкӗпе фронта тухса кайнӑ хӑюллӑ медработник — старши военфельдшер Федора Гайкина Ленин орденӗпе Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Пирӗн ывӑлсен, Хӗрлӗ Ҫар воинӗсен — ефрейтор-связист Иван Банбуринӑн, политрук Андрей Гавриловӑн, капитан Илья Павловӑн, снайпер Захар Востриковӑн, капитан-артиллерист Федор Семеновӑн, пулеметчик Виталий Уруковӑн, капитан-артиллерист Ф. Шатровӑн, сапер Ф. Волковӑн, старшина Т. Павловӑн, старши лейтенант В. Немцовӑн, старши политрук К. Кузнецовӑн тата ытти ҫӗршер паттӑрсен чаплӑ ӗҫӗсем орденлӑ тӑван республикӑн чысӗпе чапне ҫӳле ҫӗклеҫҫӗ.

Тӑван ывӑлӑмӑрсем! Эпир сирӗн паттӑрлӑхӑр-

па, хăюлăхăрпа мухтанатпăр. Сирĕн паттăр ĕçсем çинчен пирĕн халăх юрăсем хывать. Анчах сирĕн татах та ĕç нумай тумаллине эпир пĕлетпĕр. Пирĕн халăхăн кашни ывăлĕ герой пулма тивĕçлĕ, унăн тискер тăшмана пĕр шеллемесĕр вĕлерме пĕлмелле. Верховный Главнокомандующин, Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн çак сăмахĕсене яланах асра тытăр. «Чи кирли халĕ çакăнта пулса тăрать: пирĕн пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн хăйĕн çапăçури ăсталăхне кунран-кун лайăхлатса пымалла, Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур командирĕсемпе боецĕсен вăрçă опытне вĕренмелле, çĕнтерӳ ĕçĕ ыйтнă пек çапăçма вĕренмелле».

Пирĕн тăван ывăлăмăрсемпе хĕрĕмĕрсем, хăвăр ĕçсен мастерĕсем пулăр, геройсем пулăр! Совет воинĕн чысне çӳлте тытса пырăр. Хамăрăн тăван çĕршывшăн, унăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, пире Сталинла Конституци панă аслă правăсемшĕн, тăшмана хирĕç хăюллăн та пĕлсе çапăçăр, чаплă совет хĕçпăшалĕн çĕнтерĕвĕсене ӳстерсе пырăр!

Эпир,—сирĕн ачăрсемпе аннĕрсем, пиччĕрсемпе шăллăрсем, арăмăрсемпе ачăрсем, кунта, тылра, колхоз уйхирĕсенче, фабрикăсемпе заводсенче, хамăрăн хаклă çулпуçăмăр, Сталин юлташ чĕннине пурнăçа кĕртсе пырса, фронтра тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине пурне те туса парассишĕн хамăрăн вăйăмăрсене хĕрхенмесĕр ывăнма пĕлмесĕр, çĕрне-кунне пăхса тăмасăр ĕçлетпĕр.

Аслă Атăл Каспи тинĕснелле епле хăватлăн тапса тăрать, пирĕн халăх та фронтпа çĕршыва çавăн пекех тырпул, аш-какай, сĕт-çу, промышленноçа — чĕртавар татти-сыпписĕр парса тăрать. Атăл шывĕ ĕмĕрне те типес çук, пирĕн халăхăн вăй-хăвачĕ нихăçан та иксĕлес çук!

Иртнĕ çулта пирĕн республикăри колхозсем, Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнчи хăйĕн приказĕнче чĕннипе, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, тырпул тухăçлăхне ÿстерес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕç. Республика ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ, государствăна ялхуçалăх çимĕçĕсем памалли плана вăхăтра тултарчĕ.

Пирĕн республика ялхуçалăхĕнче облаçсемпе крайсем тата республикăсем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тунă çитĕнÿсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш премие илме тивĕçлĕ пулчĕ. Мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем, ялхуçалăх специалисчĕсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр, çине тăрса ĕçлесе илнĕ çав пысăк награда республикăри ĕççыннисене Тăван çĕршыв чапĕшĕн çĕнĕ çĕнтерÿсем тума кĕрешĕве хавхалантарчĕ. Республикăри колхозсемпе МТС-сем çуракине хастарлăн та йĕркеллĕн тата пĕлтĕрхинчен 12 кун иртерех туса ирттерчĕç, çураки планне ытлаш-

шипех тултарчĕç, оборона фончĕ валли 6,5 пин гектар ытла акса хăварчĕç. Колхозсемпе МТС-сенче тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать.

Пирĕн фабрикăсемпе заводсенчи рабочисемпе работницăсем, кăткăс станоксемпе ĕçлесе, фронт валли ывăнма пĕлмесĕр хаяр хĕçпăшал туптаççĕ. Вăрçă кунĕсенче республикăри промышленность чылай ӳсрĕ, промышленноçра çĕнĕ отрасльсем çуралчĕç. Вăрçă пыракан районсенчен куçса килнĕ фабрикăсемпе заводсене эпир вăхăтра вырнаçтарса лартса ĕçе ятăмăр. Хĕрлĕ Çар валли продукци туса кăларасси кунран-кун ӳссе пырать. Чăваш республикинчи нумай предприятисем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн, ВЦСПС-па наркоматсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене пĕрре кăна мар илчĕç.

Пирĕн республика хăйĕн нумай ывăлĕсене фронта ăсатрĕ. Вĕсен вырăнĕнче ĕçлеме хĕрарăмсемпе хĕрсем, пирĕн çамрăксем тăчĕç. Вĕсем хăйсене хушнă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем правительствăн пысăк наградисене илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Паттăр ывăлăмăрсем! Сирĕншĕн пирĕн халăх ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать. Эпир сире валли апат-çимĕçсем, ăшă тумтирсем, кĕпе-йĕмсем тăрăшса пухатпăр, фронта пиншер парнесем ярса тăратпăр.

Республикăри ĕççыннисем тăван Хĕрлĕ Çар

валли хĕçпăшалсем тума 82 миллион тенкĕ укçа пухса пачĕç. Хĕрлĕ Çар фондне пирĕн колхозниксем харпăрхăй запасĕнчен 120 пин пăт ытла тĕштырă хыврĕç. Çакăншăн пире Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар ячĕпе икĕ хутчен тав туса саламларĕ.

Пирĕн паттăр воинсем! Фашистла ирсĕрсене ывăнма пĕлмесĕр пĕтерсе пырăр! Хăвăрăн тылри арăмăрсемшĕн, ачăрсемшĕн, аçăрсемпе аннĕрсемшĕн ан пăшăрханăр. Вĕсемшĕн пĕтĕм халăх мĕнпур кăмăлтан тимлĕн тăрăшнине пĕлсе тăрăр. Халăх фронтовиксен çемьисене пулăшасси кунран кун вăйланса пырать.

Тылра эпир ывăна пĕлмесĕр ĕçлетпĕр. Анчах вăрçă пире кашнинех татах та ытларах вăй хурса, татах та тимлĕнрех ĕçлеме хушнине эпир пĕлетпĕр. Пирĕн умра ĕçсем татах та нумай-ха.

Пирĕн хаклă фронтовиксем! Тăван çĕршыв умĕнче, сирĕн умăрта, пире хўтĕлекен паттăрсем, эпир çапла тупа тăватпăр: Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртĕпĕр, фронтшăн икĕ хут, виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр. Сирĕнпе пĕрле пĕтĕм чĕререн тупа тăватпăр: ылханлă тăшмана пĕтерсе тăкăпăр, тăван çĕре нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатăпăр!

Тăшман вăйла-ха. Вал хăй пур-пĕрех пĕтессине туйса, тискерленнĕçемĕн тискерленсе пырать. „Выçă кашкăр та фашистран йăвашрах", тет пирĕн халăх.

Чăваш халăхĕн ывăлĕ, ăçта тĕл пулнă, унта вĕлер фашиста! Пусаран вăрлăх ан кĕт, фашист-

ран ырлăх ан кĕт. Вĕлер фашиста!

Ăçта нимĕç чунилли—унта çын вилли. Вĕлер нимĕçе! Нимĕçсене мĕнчул ытларах вĕлерен, эпир татăклăн çĕнтерес кун çавăн чухлĕ хăвăртрах çитĕ!

Чăваш ывăлĕ! Тăвансемпе туссемшĕн санăн чĕрÿ яланах тăванла çемçе те кăмăллă пулнă. Украина, Белорусси, Литва, Латви, Эстони çĕрĕсен, Смоленск, Ленинград облаçĕсен нимĕçсем йышăннă районĕсенче пирĕн тăвансем фашист атти айĕнче йынăшнă сасса эсĕ илтетĕн. Пирĕн тăван совет çыннисем фашистсен пусмăрĕнче асапланнă чухне, санăн чĕрÿ лăпкă пулма пултараймасть! Украинăра Остер хули патĕнче, чăваш халăхĕн аслă поэчĕн Çеçпĕл Мишшин тăпри выртать. Вăл Украинăна, хамăрăн тăван чăваш çĕршывне юратнă пекех, юратнă. Фашистсем пирĕн поэтăн таса тăприне хăйсен юнлă аттисемпе таптаса вараларĕç.

Чăваш халăхĕн ывăлĕ, васка! Пирĕн тăван çĕршыври ытти халăхсен мухтавлă ывăлĕсемпе—Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе пĕрле пулса, хамăрăн çĕре тăшманран хăвăртрах тасат! Çапăçу хирĕнче Улăп-паттăр пул! Санпа юнашар алла-аллăн тăрса вырăс, украинец, белорусс, грузин, тутар тата пирĕн тăван çĕршыври ытти халăхсен воинĕсем çапăçăва кĕреççĕ. Сан чĕрере пирĕн паттăр землякăн Василий Иванович Чапаевăн хăвачĕ сÿнме пĕлмесĕр çунса тăрать. Санăн юнанта—аслă Атăл хăвачĕ.

Герой пул, чăваш халăхĕн ывăлĕ! Тăшмана

çапса аркат! Киле çĕнтерӳпе тавăрăн, кунта сана пĕтĕм халăх чун-чĕререн юратса кĕтсе тăрать!

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар!

Пирĕн çĕршыври халăхсен таса туслăхĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çар боецĕн чаплă ятне чыслăн тытакан чăваш халăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, пирĕн полководец, Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин!

**Алă пуснă:**

**ПИСЬМО**
**чувашского народа своим сынам-фронтовикам**

на чувашском языке

**ЧУВАШГОСИЗДАТ**
**Чебоксары — 1943**

Отв. по выпуску **П. Т. Золотов.**

НТ 163. Подписано к печати 8/VI-43 г. Заказ № 646.
Тираж 1400 экз.

Типография № 1 Упр. полиграфпром. при СНК ЧАССР
г. Чебоксары.